КОНТРОЛЬНО-ИЗМЕРИТЕЛЬНЫЕ МАТЕРИАЛЫ ПО РОДНОМУ ЯЗЫКУ И ЛИТЕРАТУРЕ.

5 класс

Входная диагностика.

Диктант

Цель: проверка знаний изученных орфограмм и пунктограмм.

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

Шăшипе çерçи.

Шăшипе çерçи питĕ туслă пурăннă: нихăçан та пĕр-пĕрне кӳрентермен, харкашман. Ĕçе мĕнле тумалли çинчен яланах пĕр-пĕринпе канашланă. Пĕрле ĕçленĕ, пĕрне-пĕри пулăшнă.

Пĕррехинче вĕсем çул çинче виçĕ ыраш пĕрчи тупнă. Мĕн тумалла-ха? Шухăшланă-шухăшланă та пĕрчĕсене уя акма килĕшнĕ: шăшийĕ сухаланă, çерçийĕ сӳреленĕ.

Паха ыраш ӳссе çитĕннĕ туссен! Шăши хăйĕн çивĕч шăлĕсемпе ăна хăвăрт вырнă, çерçи çунаттисемпе авăн çапнă. Тупăша пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса хунă та уйăрма пуçланă: пĕр пĕрчине шăшие, теприне — çерçие, пĕрне — шăшие, теприне — çерçие. Анчах юлашки пĕрче ниепле те пайлайман.

Контрольная работа по теме «Синтаксис. Пунктуация».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Синтаксис. Пунктуация".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

Çил-тăман.

Чалăш тăман шăхăрать — çулсене шурă шăпăрпа шăлать. Пӳрт тăррисемпе кĕртсем çинче шурă çăнăх мăкăрланать. Чăрăшсемпе хыр тураттисем çинчен лашлата-лашлата юр ӳкет. Хирти тăсăк юр кĕрчĕсем çийĕн çурап тăман шелсĕр вĕçтерет. Шурă тĕслĕ кĕçĕн кăрлач пĕтĕм парăсне сарса ярса таçталла юхать!

Çунасем, машинăсем, çуран çынсем хыççăп юр пĕтĕрĕне- пĕтĕрĕне чупать, пӳртсемпе юпасем тата йывăçсемпе тĕмсем тавра шурă вăйă карти çаврăнать, çулсеие-сукмаксене кĕрепле юр ним

курми шăла-шăла лартать. Картасемпе хӳмесем шурă хумсем айне пытапаççĕ, йывăççеп айĕнче варинкке евĕр кĕрт, йывăççен тăрринче — шурă ялавсем.

Çаврăнать, пăтранать, хӳсе лартать. Шăхăрать, ӳлет, йĕрет. Куçа хуплать, çурăмран тĕртет, сывлăша пӳлет.

(98 сăмах. II. Сладковçырнинчен.)

Контрольная работа по теме ««Гласные звуки и обозначение их на письме».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы " Гласные звуки и обозначение их на письме ".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ИРХИ ВĂРМАН

Тин кăна тухса сарăлнă хĕвел çутинче уçланкăра чечексем тухăçалла пăхса йăлкăшаççĕ. Вĕсем ыйхăран вăраннă ача тăван амăшне пăхса кулнă пекех туйăнаççб. Чечексем çинче сывлăм тумламĕ ахахăн-мерченĕн йăлтăртатать. «Упи каçман çырминчен» çăра тĕтре йăраланса хăпарать. Вăл ашкăрса ӳсекен упа- сарри тĕмĕсем пăч-пăч курăнакан шĕшкĕ, палан, кăтанкă тĕмĕсем хушшинче, вĕтĕ хырлăхра упаленсе çӳрет. Кайраи вара, янкăр таса тӳпери пĕчĕк шурă пĕлĕтсем евĕр, тахăш вăхăтра сирĕлсе çухалать.

Кайăксем пурте вăраннă ĕнтĕ. Ирхи вăрманта куккук авăтни ян каять, тĕрлĕ кайăксен илемлĕ юррисем таçта çитиех янраççĕ. (А. Артемьев.)

Контрольная работа по теме «Фонетика».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы " Фонетика".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

Ванюк.

Ванюк — чăваш каччи. Инçетрен тăван ялне таврăнать. Вăл çӳллĕ те яштака кĕлеткеллĕ йĕкĕт. Куçĕсем унăи хăмăр, пичĕ пысăках та мар, хĕсĕкех те мар, вĕсем час-часах çуталса тăраççĕ. Ахаль

чухпе вёсем ачалла шухăшсăррăн, ачалла телейлĕн, çемçен те ăшшăн йăлкăшаççĕ. Ку вăл — лăпкă та тӳлек кăмăл палли.

Тăрăхларах пит, тӳрĕ, пысăк мар сăмса, кăшт хулăнрах, тăртанчăкрах тута. Тути-çăварĕ те, пуçĕие сăмси, тӳрĕ çамки пекех, хитре, килĕшӳллĕ, илĕртӳллĕ. Сăн-иитпе пуринчен те ытларах илем кӳрекенни вăл, ахăртнех, шул гăраи кăтралан- са тăракан хулăн хура çӳç. Тум-юмĕ те унăн хитре пит-куçĕпе, йăрăс, ытармалла мар кĕлеткипе килĕшсе тăрать.

(95 самах. Л. Тамеров сырнинчен)

Контрольная работа по теме «Лексика».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Лексика".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

Кĕркунне.

Вăрмансем, улăх-çарансем, сад пахчисем ем-ешĕл-ха. Кĕр çитни ниçтан та курăнмасть. Август уйăхĕн вĕçĕнче вара таврара такам асăрхаиуллăн утса çӳрени палăрчĕ. Сад пахчисенче те, вăрмансенче те вăл хăйĕн йĕрĕсене хăварма тытăнчĕ.

Ку — кĕр художник иккен. Малтанах вăл симĕс çулçăсемпе курăксем патне çывхарма именетчĕ. Ара, мĕнле сăрлăн-ха чип-чипер лараканскерсене.

Анчах кунсем иртеççĕ. Кĕр художникăн та хăйĕн пултарулăхне кăтартас килет.

Акă вăл çĕмĕртсем патне çывхарчĕ. Пĕр енчен пырса пăхрĕ, тепĕр енчен. Мĕнле сăрă кирлĕ-ши? Сарри, хăмăрри, хĕрли? Кĕр хăйĕн хутаççинче чылайччен тăрмашрĕ: сăрăсем шырарĕ. Хăйĕн хитре мĕлкипе туратсеие тирпейлĕн сăтăрма пуçларĕ.

Ĕçлесе ывăннă хыççăн, каçалапа, кĕр художник хăйĕн ĕçне айккинчен пăхса сăнать. Аслă уя тухать те вăрмаи енне тинкерет...

(110 сăмах. В. Тимаков çырнинчен.)

Итоговая контрольная работа по родной литературе за курс 5 класса.

Тестирование.

ЦЕЛИ: выявление уровня знаний и умений учащихся по родному языку и литературе за5 класс, умения решать тестовые задания.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ ПО ВЫПОЛНЕНИЮ РАБОТЫ:

1. Контрольно-измерительные материалы предназначены для проведения итогового тестирования по родному языку и литературе за курс 5 класса. Представлен один вариант теста, включающий 8 заданий с выбором ответа, 2 задания с кратким ответом. Каждое выполненное задание оценивается одним баллом. Максимальное количество баллов — 10.

2. Таблица пересчета баллов: при проведении тестовых работ по обществознанию критерии оценок следующие:

«5» - 90-100%

«4» - 78-89%

«3» - 55-77%

«2» - менее 54%

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

1. **Б, Г, Д, Ж, З** сас паллисем мĕнле чĕлхерен йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулаççĕ?

а) вырăс чĕлхерен;

б) чăваш чĕлхерен;

2. Шухăш енчен пĕр-пĕринпе çыхăннă предложенисен ушкăнне мĕн теççĕ?

а) текст;

б) калав;

3.Чĕлхери мĕн пур сăмахсен йышне мĕн теççĕ?

а) ФОНЕТИКА

б) ЛЕКИКА;

4. Пĕр сăмах темиçе ăнлава пĕлтерет пулсан ăна мĕн теççĕ?

а) пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах;

б) нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах;

5.Тĕрлĕрен илтĕнекен, пĕр пуплев пайĕнчен пулнă, çывăх е пĕр ăнлава пĕлтерекен сăмахсене мĕн теççĕ?

а) антоним;

б) синоним;

6. Сâмахâн пĕлтерĕшлĕ чи кирлĕ пайĕ?

а) аффикс;

б) тымар;

7. Пĕр – пĕр район тĕрĕхĕнче, ун таврашĕнчи ялсенче çеç усă куракан сâмахсене мĕн теççĕ?

а) диалектизмсем;

б) профессионализмсем;

8. Чĕлхе наукин сâмах çинчен, унâн улшâнâвĕ çинчен вĕрентекен наукâна мĕн теççĕ?

а) морфологи;

б) лекика;

9. Мĕн вâл ача-пâча сâмахлâхĕ?

10. Тупмалли юмах тесе мĕне калаççĕ?

Ответы:

1- а

2-а

3-б

4-б

5-б

6-б

7-а

8-а

9-печек ачасем валли калакан е юрлакан тата ачасем хушшинче сурекен сава, юра…

10-Тупмалли юмах тесе сут санталакан терле пуламесене, йаласене,ятарла сананине калассе.

6 класс

Входная диагностика.

Диктант

Цель: проверка знаний изученных орфограмм и пунктограмм.

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ПĂШИСЕМ

Эпĕ канмалли куна вăрманта ирттерме кăмăллатăп. Йĕлтĕр çине тăратăп та чăшлаттарса çеç пыратăп шурă юра. Йывăçсем хушшинче лăпкă. Çанталăк сивви те сисĕнмест.

Пĕррехинче çапла ăвăслăха çитсе кĕтĕм. Хам куçăма ĕненессĕм килмест. Талккăшпех юра пусăрăнтарнă. Турат хуçăкĕсем сапаланса выртаççĕ. Хăшне-пĕрне шап-шурах тунă, кăшланă ĕнтĕ. Кам кăшланă-ха ăвăс туратне?

Пуçа ватса тăратăп.

Кунта пăшисем çĕр каçнă иккен. Вĕсемех йывăç гурачĕпе апатланнă.

Уçланкă хĕррине тухрăм. Тепĕр енче пăшисем курăнчĕç. Тăпах чарăнтăм. Юман çумне тершĕнтĕм. Пăшисем хĕвел питтинче хĕртĕнеççĕ пулас. Пĕр-пбринпе айкашаççĕ пăрушбсем. Амăшĕсем те кунтах. Кĕçех весем пурте йывăçсем хушшине кĕрсе çухалчĕç.

Пăшисем хĕллехи сивĕре майракине пăрахаççĕ, çуркуннеччен çĕнĕ майрака çитĕнтереççĕ.

Контрольная работа по теме «Существительное».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Существительное".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ÇУТ ÇАНТАЛĂКА ЮРАТСА

Шупашкарти вăрман хуçалăхĕ Атăлăн сулахай çыранĕнчен тытăнса Мари Эл вăрманĕсем таранах тăсăлать. Унăн ытларах пайне хырлăх йышăнать, çавăн пекех ем-ешĕл чăрăшсем, шап-шурă хурăнлăхсем, ытти йывăç-тĕм кирек кама та тыткăна илеççĕ.

Кунта, Чăваш вăрманĕн ытти вырăнĕсенчи пекех, вăрман хуçалăхне йĕркелес, вăрмана çĕнетсе пырас, хӳтĕлес тата çĕнĕрен лартса чĕртес, йывăç касас ĕçсен мĕнпур комплексне пурнăçласа пыраççĕ.

Çак тăрăхра, ытти çĕртипе танлаштарсан, тата тепĕр паллă уйрăмлăх пур: вăрмансене вут-çулăм час-часах çавăрса илет. Çавăнпа çуркуннехи-çуллахи тапхăрта çав тери сисĕмлĕ пулма тивет. Вăрман çыннисем пушара хирĕç кĕрешмелли мероприятисене пите тимлĕ пурнăçласа пыраççĕ. Пушар техники те, сăнав пункчĕсем те, çыннисем те яланах сыхă. Торфлă вырăнсенче уйрăмах тимлĕ пулмалла. Пĕлтĕр вбсем çуннипе пĕтĕм хулана тĕтĕм сырса илнĕччĕ. Вăрманти типĕ мăк-курăка тĕллĕн-тĕллĕн вут часах хыпса илет.

Контрольная работа по теме «Прилагательное».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Прилагательное".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ИРХИНЕ

Таса та илемлĕ ир. Пĕтĕм çут çанталăк аслă уяв тăвать тейĕн. Кун янкăр уяр. Тӳпе тăрна куçĕ пек тăрă, унта пĕр шурă пĕлĕт те курăнмасть. Улăхсемпе варсенчи çăра тĕтре хĕвел тухнă-тухман сирĕлсе пĕтрĕ, çул тусанне вырттарнă сывлăм та типрĕ, вăл сулхăнри çерем çинче кăна ахахăн-мер- ченĕн йăлтăртатать-ха. Ешĕл курăка таптасан нӳрĕ йĕр юлать. Выльăх кĕтĕвĕ хире ирех тухнă та çырма-çатра тăрăх саланнă, ешĕл çерем çинче путексем тăрст-тăрст! сиккелесе çӳреççĕ. Хăвалăх хушшипе юхса выртакан Мăн çырма тăрăх кĕтӳçĕ пушши шартлатни илтĕнсе каять. Ӳркенмен тăрисем, тӳпе- рен куçа курăнман çĕршер пĕчĕк шăнкăрав çакса янă евĕр, ĕмĕрхи хавяслă юррисене шăрантараççĕ. (А. Артемъев.)

Контрольная работа по теме « Числительное».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Числительное".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ĂÇТА ТĔПЛЕНЕССИНЕ ХĂЙ ПАЛĂРТАТЬ

Шăнкăрчсем Европăри тата Вăтам Азири çĕршывсенче анлă саралнă.

Аçисем Чăваш Ене ака уйăхĕн пĕрремĕш çурринче, ами- сенчен 3—4 талăк маларах, килеççĕ те йăва суйлаççĕ. Ами çитсен аçи куç хывнине тишкерет, ăçта тĕпленессине хăй палăртать. Пĕри те мая каймасан пулас ашшĕне татах шы- раттарать. Килĕшекеннине тупсан вĕллере мĕн пуррине пĕр- чĕн-пĕрчĕн кăлараççĕ. Улăм пĕрчинчен, типĕ куракран, хытă тата çемçе тĕкрен, чĕр чун çăмĕнчен çĕнĕ йăва çавăраççĕ. Вĕлле кусĕн диаметрĕ 50—55 миллиметр пулмалла. Унтан пĕчĕкрех шăтарнине йышăнмаççĕ. Эпĕ йывăç хăвăлĕнчен (диаметрĕ — 150—200 миллиметр, вĕлле пусĕпе тĕпĕ хушши 400 миллиметр) тăватăп.

Акан иккĕмĕш çурринче ами 4—6 çăмарта тăвать, вĕсене ăшăтма ларать. Чĕпĕсем тухсан çăмарта хуппине веллерен кăларса пăрахать. Лешсем 5—7 талăкран çеç сас параяççĕ. Уйăх- ран вăл 4—5 кил урлă илтĕнекен пулать. Тул çутăлса мĕн тĕт- тĕмленичченех апат ыйтаççĕ. Ашшĕн турат çинче юрă шăран- тарма пĕр вăхăт та çук, пĕчĕккисене тăрантармалла. Аслисем чĕпписене хăйсем çирĕплетнĕ черетпе çитереççĕ, йăва патне пĕри сехет хушшинче — 18—22, кун каçиччен — 270—330, иккĕшĕ 540—660 хутчен апатпа çитеççĕ. Хĕвел ял хыçне ан- сан çеç канма вăхăт. Йăва патĕнче ула курак, чакак е кушак курăнсанах ашшĕ-амăшĕ хыгтăн янăратса сас парать — чĕппи- сене пусăрăнса ларма хистет. (А. Кольцов.)

Контрольная работа по теме « Местоимение».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Местоимение".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

ВĂРМАН - ПИРĔН ПУЯНЛĂХ

Чăваш вăрманĕ пирĕн пуянлăх пулнине пурте аван пĕлетпĕр. Унăн сывлăшĕ кăна мар, йывăç-куракĕ те питб хаклă. Вăрман вуттипе, йывăç материалĕсемпе, уйрăмах яллă вырăнта, кам кăна усă курмасть пуле. Халăх хуçалăхбшĕн те вăрман пысăк пĕлтерĕшлĕ, пĕр кубла метр йывăçран целлюлоза тонни-тоннипе, этил спирчĕ темиçешер литр, выльăх çĕпри те- миçешер килограмм хатĕрлеççĕ т.ыт.те.

Унсăр пуçне вăрман — паха климат, шыв упрамалли, тăпра ишĕлесрен хӳтĕлемелли вырăн. Кунти сывлăшпа кăкăр тулли сывлас килет, сывлăхшăн питĕ усăллă вăл. Пĕр кун хуш- шинче 25 тăваткал метрти çулçăсем çынна пĕр талăк сывламалăх кислород кăлараççĕ. (А. Фадеев.)

Хушма ĕç. Текстри местоименисене мĕнле пуплев пайĕ вырăнне усă курнине кăтартса çырăр.

Контрольная работа по теме «Наречие».

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися темы "Наречие и подражательные слова".

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

МĔН ТЕРИ ИЛЕМ!

Пăхатăп, манран инçе те мар пăши тăрать. Мăшăл-мăшăл сывлани илтĕнчĕ. Мана асăрхарĕ, мăйракисене тăратса çырма хĕррипе чуптарчĕ. Унăн капмар та илемлĕ кĕлетки йывăççем хушшипе вĕльт, вĕльт çеç курăнса тăчĕ, мана та хăйпе пĕрле асамлă тĕнчене илсе кайрĕ. Куçран çухаличчен пăхса тăтăм. Мĕн тери илем! Вăрман пушшех пуянланса кайнăн туйăнчĕ.

Чак-чак чакак, ырă хыпар пелтерсе пуль, ула такка, карăк вĕççе иртрĕç. Йĕри-тавра чĕрĕлĕх. Утсан-утсан каллех пакша курнă вырăна çитрĕм. Хам хурса хăварнă мăйăртан темиçе мăйăр кăна юлнă. Çитĕр пакша, савăнтăр.

Вăрмантан тухрăм. Ман умра, шăкăл-шăкăл калаçса ларнă евĕр, хаьь-халь качча каяс капăр хĕрсем пек пилешпе палан лараççе. Çырлисем вут-хĕм тăкаççĕ. Хĕвел çинче темле ахах, хĕрлĕ шăрçа пек йăлтăртатаççĕ.

Тавах сана, Питукан варĕ, хăвăн пуянлăхна кăтартнăшăн.

Шăнкăртатса выртакан Питукан çăлкуçĕнчен тăраниччен шыв ĕçетĕп те килеллеваскатăп. (Н. Воробъева.)

Хушма ĕç. Евĕрлев сăмахбсене тупса палăртăр, вĕсем пĕлтерĕшĕ тĕлĕшснчен хăш ушкăна кĕнине кăтартăр.

Итоговая контрольная работа.

Диктант

Цель: контроль освоения учащимися курса чувашского языка 6 класса.

Время проведения: 45 минут.

Критерии оценивания диктанта см. в пункте 2.4

Акă ял хапхи курăнма пуçларе. Ялтан бне сассисем, кбтӳçе пушăпа шăрт-шарт! шартлаттарни илтбнсе тăчб. Эпб пбчбк чухнех атте-аннепе кĕтӳ кĕтме юрататтăмччĕ, çак ирхи сасă та ман чуна çĕклерĕ. Кĕтӳре пурĕ миçе ĕне пулнине шут- латтăмччĕ. Пилĕк çул каялла çак кĕтӳре хĕрлĕ ĕнесем ну- майччĕ, паян вара — хурисем. Ĕнесем хапхаран тухса пĕтес- се кĕтсе тăмарăм, часрах çăлкуçăн шăнкăр-шăнкăр сассине илтес терĕм.

Çанталăкĕ ирех шăрăх тăрать, сывлăшб вĕриленсех çитей- мен, хальлбхе уççăн сывлама пулать. Пĕтĕм ӳсен-тăран, кайăк- кĕшĕк, çын çĕне кун пуçланă, ĕçе пикеннĕ. Пурте пĕр пек мар, çапах пурин те пĕр ĕмĕт — телейлĕ пуласси. Çаплах ĕнтĕ, эпир телейлĕ пурнăçа курма çуралнă, анчах уншăн керешме пĕлес пулать. *(Н. Воробъева.)*

Промежуточный контроль (на знание изученных произведений).

Тестирование.

Цель: контроль освоения учащимися изученных произведений.

Время проведения: 45 минут.

1.Чâваш халâхěн никěсне пуçласа яракан халапри паттâр.

а) улâп; б) юман; в) Циклоп;

2.Чâваш азбукине çырса кâларакан.

а) К.Иванов; б)Иван Яковлев; в)Илья Ульянов;

3.Мěн вâл халâх юрри?

4. Мěн вâл литературâ юрри?

5. «Илемлě», «Вěлле хурчě» сâвâсен авторě кам?

а) К.Иванов; б) Ф.Павлов; в) А.Смолин.

6. Хâш поэтâн сâввинче Библире тěл пулакан сâмахсене тěл пулма пулать?

а) А.Смолин; б) А. Кâлкан; в) В.Туркай.

7. А. Кâлканâн хайлавěнчи тěп сâнарсем:

а) кашкâр, упа; б) тилě, мулкач; в) çерçи, кашкâр;

8. Мěн вâл ниме?

9. Д.Гордеев çырнâ «Кукâр алâсем» хайлавра ват старик пур. Вâл мěнле ятлâ-ши?

а) Ваççа; б)Наççа; в)Микка;

10. Д.Гордеев çырнâ «Кукâр алâсем» хайлаври тěп герой мěншěн хайлав пěтмěшěнче йěрсе ярать?

а)вâрçасран хâраса; б)намâс пулнипе; в)хěнесрен хâраса;

11. А.Николаев çырнâ «Юра асламâшê» хайлаври учительница мêнле ятлâ-ши?

а)Елена Андреевна; б)Наталья Андреевна; в)Лариса Андреевна;

12. «Кукамай» хайлавâн авторê кам?

а)А. Кâлкан; б)В.Туркай; в)Л.Сарине.

Хуравсем:

1. а) улâп;

2. б)Иван Яковлев;

3. Халâх юрри –

4. Литературâ юрри –

5. б) Ф.Павлов;

6. а) А.Смолин;

7. б) тилê, мулкач;

8. Ниме – коллективная работа.

9.в)Микка;

10. б)намâс пулнипе;

11. а)Елена Андреевна;

12.в)Л.Сарине

7 класс

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: ____________________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: проверочный диктант.

ЦЕЛИ: выявление уровня знаний и умений учащихся по родному языку за 5-6 классы, проверка орфографической и пунктуационной грамотности.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «Кашнин хâйêн тêнчи» под диктовку.

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Кашнин хâйêн тêнчи

Тêлêнмелле кайâк вâл хура курак, êçлеме те, вâрлама та пултарать. Пилêк çул каялла кўршêри кил хуçи хêрарâмê чâххисем çâмарта туманни пирки кўренсе калаçма тытâнчê. «Кâтиклетеççê-çке-ха хâйсем, йâвара вараланнâ майисêр пуçне урâх çâмарта çук. Те хâйсемех çисе яраççê», - тет.

Êç вâхâтне пâхмасâрах йâва хураллама килêшрêм. Лупас тâрринче йâваран пИлêк-ултâ метрта пытанса выртрâм. Акâ хëвел те чылай çўле хâпарчê, унâн пайâркисем тимêре âшâтса мана та тарлаттарма тытâнчêç. Çавах хускалмасâр выртма тâрâшатâп. Тâватâ чâх кâтиклете-кâтиклете йâвана хâпарса анчë, çâмартасен шучê тâватта çитрê. Кêç лупас айêнчи уçâ алкран хура курак вêçсе кëчë те - тўрех чâх йâвине. Мâн çâварëпе çâмартана хыпса тулалла вêçрê. Çав хушâра тата виçê курак вêçсе килчë.

Уçâ алâк тêлне атма тâратма тытâнсан тин чâх çâмартисем çухалми пулчêç.

Р.Р. ИЗЛОЖЕНИЕ С ЭЛЕМЕНТАМИ СОЧИНЕНИЯ

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: изложение.

ЦЕЛИ: совершенствовать умения воспринимать текст на слух, выделять главное, написать изложение по тексту, умение вводить в текст элементы сочинения, продолжить работу по развитию орфографической зоркости, развивать речь учащихся, обогащать их словарный запас.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ:

1.Организационный момент.

2.Сообщение темы и цели урока.

3.Работа с текстом изложения

- чтение текста учителем
- выделение микротем
- беседа по вопросам
- чтение текста по обзацам, составление плана, пересказ по плану

4.Написание изложения в черновиках

5.Редактирование изложений

6.Работа в беловиках

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 часа

Вâрттâн **пырса пâрахнâ ача.**

(Чâн пулни.)

Пĕр чухâн арâмâн Марье ятлâ хĕр пулнâ. Пĕрре Марье ирхине шыва кайма тухнâ та алâк умĕнче кипкепе чĕркенĕ япала выртнине курнâ. Марье витресене лартнâ та кипкене салата пуçланâ. Вâл кипкене сĕртĕнсенех ун âшĕнчен темĕскер: «Е-е-е!» - тесе кâшкâрса янâ. Марье пĕшкĕнсе пâхнâ та
кипке âшĕнче пĕчĕкçеç , тин çуралн â хĕп-хĕрлĕ ача выртнине курнâ. Ача кâшкâрса йĕнĕ, Марье âна пӳрте йâтса кĕнĕ те кашâкпа сет ĕçтерме тытâннâ.

Амâшĕ Марье аллинчи ачана курсан шанк! хытса тâнâ. Амâшĕ ку ачана âçтан тупнине пĕлнĕ хыççâн: «Эпир ахаль те чухâн пурâнатпâр, çын ачине епле тâрантарса пурâнâпâр. Ак ялти ятлâ çынсене кайса калас, ан тив, âна пирĕн патâртан илсе кайччâр», - тенĕ. Çакâнпа Марье килĕшесшĕн пулман, айâпсâр пĕчĕк те таса чуна ытла та хĕрхеннĕ вâл. Марье йĕрсе амâшне ӳкĕтленĕ: «Анне, ан тив âна, вâл нумай çиес çук . Пâх-ха эсĕ âна: унâн аллисемпе пӳрнисем мĕнле хĕрелсе, пĕркеленсе кайнâ». Амâшĕ ача çине тинкерсе пâхнâ та âна шелленĕ, чунĕ ыратса кайнâ. Вара вâл âна хâйсем патне хâварнâ. Марье вâл ачана ялан хâй пâхнâ: вâл âна ĕçтернĕ, çитернĕ, шелленĕ, çывâрттарнâ чух юрâсем юрланâ.

Ĕç. Çак тĕслĕхрен тухакан ыйтусем тâрâх изложени шухâшне малалла тâсâр.

1. Пурнâçâн мĕнле ыйтâвĕсене тапратать çак пулса иртнĕ тĕслĕх?
2. Мĕнле çын-ши ача амâшĕ?
3. Мĕншĕн Марье ачана урâх çынсем патне кайса пама килĕшмест?

4. Çакâн пек тĕслĕхсем мĕншĕн пурнâçра тĕп пулаççĕ?

5.Сирĕн шухâшâр.

КОНТРОЛЬНЫЙ ДИКТАНТ ПО ТЕМЕ «ВРЕМЕНА ГЛАГОЛОВ»

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: диктант.

ЦЕЛИ: проконтролировать знания учащихся о глаголе как части речи, о временах глагола; закрепить орфографические и пунктуационные навыки

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «Çумâр» под диктовку

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Çумâр.

Тепĕр кунне çанталâк çиллĕ , çумâрлâ пулчĕ. Хырсем тâрринчен кĕтмен çĕртенех тĕксĕм пĕлĕт шуса килет те, çумâр чашлаттарсах çâватъ, унтан каллех лâпланать. Кâшт вâхат иртет те, тĕксĕм пĕлĕт татах курâнса каять, татах тепĕр âстрâм çумâр чашлаттарать. Хырсем хаяррâн, тарâхса хумханаççĕ. Вĕсем айĕнче çумâр иртсе кайсассâн та йĕп-йĕпе йĕпенен. Йывâç çинчен шултра тумламсем шâпâртатаççĕ. Çавâн пек çанталâкри шухâш-кâмâл та чылай кичемрех, тунсâхлâрах.

Халё çу варри кâна-ха, çапах сана тек нихçан та хёвеллё, âшâ кун пулассâн туйâнмасть. Анчах ку малтанлâха çеç. Сумâр хыççâн хёвел каллех âшшâн кулса ярать.

Р.Р.ИЗЛОЖЕНИЕ ПО ЗНАКОМОМУ ТЕКСТУ

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: ___________________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: изложение.

ЦЕЛИ: совершенствовать умения воспринимать текст на слух, выделять главное, написать изложение по тексту, продолжить работу по развитию орфографической зоркости, развивать речь учащихся, обогащать их словарный запас.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ:

1.Организационный момент.

2.Сообщение темы и цели урока.

3.Работа с текстом изложения

- чтение текста учителем
- выделение микротем
- беседа по вопросам
- чтение текста по абзацам, составление плана, пересказ по плану

4.Написание изложения в черновиках

5.Редактирование изложений

6.Работа в беловиках

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 часа

Çывâх тус.

Йытã, чãнах та, - çыншãн та çывãх чёр чун. Çурçёрте пурãнакансем йãтта кӳлсе çӳреç çё. Вãл сунарçãсене пулãшать, çёршыв чиккине сыхлать, кил- çурт тавращне хураллать Ученãйсем каланã тãрâх, çын йытãпа 15-20 пин çул каярах туслашнã. Йытãсем вёрнё тãрâх çывãхра кам пулнине

пёлме пулать: хаяр вёрсен - палламан çын е тискер кайӑк , хавас вёрсен - çывӑх çын е килти выльӑх.

Йытӑсен туйӑм çав тери лайӑх аталаннӑ. Сӑнавсем кӑтартса панӑ тӑрӑх унӑн туйӑмӗ çын туйӑмӗнчен миллион хут пысӑкрах. Сӑмахран, çын тӑвар шӑршине туймасть, йытӑ вара пӗр витре шывра пӗр чӗптӗм тӑвар ирӗлтерсен те сисет. Уйпа пынӑ чухне йытӑ 50 метрта пытаннӑ вӗçен кайӑка туйса илет. Геологсем йытӑсене ылтӑн тата ытти хаклӑ япаласем шыраса тупма хӑнӑхтараççӗ. Трюфель кӑмпана юратакансем те ӑна йытӑсем пулӑшнипе шыраса тупаççӗ.

Йытӑсем начартарах кураççӗ. Çынсене вӗсем 300 метртан кӑна уйӑрса илеççӗ.

Сейсмологсем, геологсем тата биологсем йытӑ çӗр чӗтреннине туйма пултарнине палӑртнӑ.Çӗр чӗтренме тытӑнас умӗн унта магнит вырӑне улшӑнать тата çын илтмен сасӑсем сарӑлаççӗ. Çакӑн пек улшӑнусене чылай чӗр чун лайӑх сисет. Çӗр чӗтренес умӗн вӗсем çурт таврашӗнчен тухса тарма тытӑнаççӗ.

Çӗр çинчи ӑслӑ йытӑсем çинчен кӗнекесенче нумай çырса кӑтартнӑ. Брем та хӑйӗн кӗнекинче йытӑ пурнӑçӗ тата унпа ӗлӗкхи çынсем тӗрлӗ чиртен чӗрӗлме усӑ курни çинчен тӗлӗнмелле лайӑх çырнӑ. Йытӑ тирӗпе чӗркесе ӗлӗкренпех çынсем ура тарланине ирттерсе янӑ. Йытӑ сӗчӗпе чылай чиртен сипленнӗ, какайне çисе упке туберкулезӗнчен сывалнӑ.

Халӗ çӗр çинче йытӑсен 400 ытла ӑрачӗ пурӑнать. Йытӑ ӗмӗрӗ вӑтамран 10-15 çул. Çӗр çинче чи нумай пурӑннӑ йытӑ 27 çула çитнӗ.

КОНТРОЛЬНЫЙ ДИКТАНТ ПО ТЕМЕ «НАКЛОНЕНИЕ ГЛАГОЛОВ»

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: диктант.

ЦЕЛИ: проконтролировать знания учащихся о глаголе как части речи, о наклонении глаголов; закрепить орфографические и пунктуационные навыки

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «Пурӑш хыççӑн» под диктовку.

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Пурӑш хыççӑн.

Пӗррехинче машиналлӑ сунарçӑ йывӑççем çулçӑ тçкнӑ вӑхӑтра сунара кайнӑ та йыттине çухатса таврӑннӑ. Иккасси вӑрманӗнче пурӑшсем пур тенине илтнӗчч эпӗ. Сунарçӑ унӑн йӗрӗ çине ӳкнӗ пулмалла. Пуçланӑ хӑвалама. Йытти - малта, ку - хыçалта. Пурӑш, чеескер, кӗрет те тарать шӑтӑкне. Çӑмха пек йытти - ун хыççӑн. Сунарçӑ та çитсе тӑрать шӑтӑк патне. Йытӑ пурӑша шӑтӑкӗнчен сӗтӗрсе тухасса савӑнса кӗтет. Малтанах хӑр-хар тунӑ сасӑ илтӗннӗ шалта. Каярахпа шӑпланать. Ырӑ мара сиссе йыттине каялла тухма йыхӑрса пӑхать. Нимле сас та илтӗнмест. Пӗр сехет кӗтет, икӗ сехет - йытӑ çук та çук. Йытӑсӑрах таврӑнать машиналлӑ

сунарçâ . Тепӗр кун ирхине ирех çав вырâна кайса кӗреçепе чавать вâл. Шâтâк юпленсе каять тем тарâнâшӗнче, унтан пачах пӗтсе ларатъ, вара тин чавма пâрахатъ.

Кун пирки эпӗ ватâ сунарçа каласа панâççӗ.

- Пурâш чее тискер кайâк, - терӗ вâл. - Йытта нихçан та ун шâтâкне кӗртме юрамасть. Пурâш хâй тâшманӗн çулне малтан та, хыçалтан та тâпра чавса питӗрет.

Тâватâ ури те ӗçлет унâн тâпра чавнâ чух. Çавâн пек пӗтнӗ ӗнтӗ унâн йьтти.

Çут çанталâк таварнâ-ши сунарçа ытлашши ӗмӗтсӗрленнӗшӗн, урâххи-ши?

Хушма ӗç. Кâтарту наклоненийӗнчи глаголсене çырса илӗр те вӗсен вâхâчӗсене, сâпачӗсене кâтартâр.

КОНТРОЛЬНЫЙ ДИКТАНТ ПО ТЕМЕ «ПРИЧАСТИЕ».

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: диктант.

ЦЕЛИ: проконтролировать знания учащихся о причастиях как части речи; закрепить орфографические и пунктуационные навыки.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «Шâрâхран та хâраман» под диктовку.

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Шâрâхран та хâраман.

Çакăн чухлӗ кăмпа ларакан вырăна пырса тухни сана та савăнтармалла пуль тетӗп. Пӗррехинче Шупашкар çывăхӗнччи çурçӗр-хӗвел анăç енчи вăрманта темиçе çул каялла тел пулнăççӗ çавăн пек вырăна. Эпӗ чăтаймарăм, чи малтанах фотоаппаратпа ӳкерсе илме васкарăм.

Валуй ятлăскер. Словарьте ăна чăвашла çемçе кăмпа тесе куçарнă. Çитӗнни, яка кăмпа евӗр, пите ванать-тӗпренет те, çавăнпа çапла каланă -ши. Çамрăкки чăмăркка та яп-яка, ӳснӗçемӗн шлепки нумай сарăлать. Паллах, чи лайăх кăмпа- семпе танлашаймасть-ха вăл, анчах япăхах та мар темелле. Тепӗр тесен, камшăн мӗнле вӗт.

Çапла, чылай татнă эпӗ анă. Шел, кашни çулах пулмасть - пӗлтӗр темшӗн тухмарӗ. Кăçал вармана кайма та шутламанччӗ, ара, çанталăк вӗри тăрать те - мен кăмпи пултăр?!

Пӗррехинче районтан Шупашкара таврăннă чухне автобуса кӗрсе ларнă хӗрарăм карçинккине пăхрăм та - хайхи «çемçи»! Нивушлӗ тухнă? Тепӗр куннех яртлаттартăм «хамăн» вăрмана. Унта вара-а!.. Нумай татрăм.

Р.Р. СЖАТОЕ ИЗЛОЖЕНИЕ

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: изложение.

ЦЕЛИ: совершенствовать умения воспринимать текст на слух, выделять главное, написать изложение по тексту, продолжить работу по развитию орфографической зоркости, развивать речь учащихся, обогащать их словарный запас.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ:

1.Организационный момент.

2.Сообщение темы и цели урока.

3.Работа с текстом изложения

- чтение текста учителем
- выделение микротем
- беседа по вопросам
- чтение текста по абзацам, составление плана, пересказ по плану

4.Написание изложения в черновиках

5.Редактирование изложений

6.Работа в беловиках

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 часа

Кашни япалан хăйêн вырăнê.

Аннепе иксêмêр купăста йăранё турăмăр. Анне мана пёлтёрхи кучансене кăкласа пуçтарма, çум курăксене тăпăлтарса тасатма хушрё. Хăй çав вăхăтра çёр хусăкларё.

Тăрăшса ёçленёшён анне мана мухтарё:

- Кашни çыннăн лайăх ёç кăна тума тăрăшас пулать, мёншён тесен лайăххи çумне лайăххи хушăнса пырсан тата лайăхрах пулать. Куратăн-и, капла мана ёçлеме те епле ансат, -терê. Кёреçепе чавнă йăрана кёреплепе сӳренё хыççăн ёç вёçленчё. Анне кёреçепе кêреплене киле кёртсе хума хушрё.

Эпё йăран хушшинче выртакан кёреçепе кêреплене илтём, иккёшне харăс тытса вёсем çине утлантăм, лашалла выляса пахча алăкёнчен кил картинелле тёпёртеттерсе кётём.

Урамра ачасем мечёкле выляççё. Вёсем сасартăк хыттăн кăшкăрса ахăлтатса кулса ячёç. Эпё çав самантрах унта вёçтерсе тухрăм.

Акă пирён урамра Хёлип Çеменё мечёке лаптапа пётём вăйран сулса маттуррăн çапса ячё. Вăл вара пирён кил урлă вёçсе каçса эпир аннепе купăста йăранё тунă çёре ӳкрё.

Эпӗ, ачасем вылянине пӑхса тӑраканскер, ним шутласа туса тӑмасӑр тӳрех ҫав мечӗке илме чупрӑм.

Нимӗн те пӗлеймерӗм, таҫта ҫити ывтӑнса кайрӑм. Сиксе тӑтӑм - каллех кайса ӳкрӗм. Манӑн сылтӑм ура пӗҫерсе кайре, ҫав тери хытӑ ыратма тапратрӗ. Пӑхрӑм та - ура пӳрнисем чӗп-чӗр юн ӑшӗнче. Ыратнине тӳсеймесӗр мак ӑрса ятӑм.

Ман ҫывӑхрах тимӗр кӗресепе кӗрепле выртаҫҫӗ. Паҫӑр эпӗ вӗсене пахчаран илсе кӗнӗ чух урама тухма васканипе ҫаплипех пӑрахса хӑварнӑ иккен.

Анне ман урана ҫуса тасатрӗ

- Кирек мӗн тусан та ёҫ хатӗрӗсене яланах тирпейлӗ пуҫтарса хӑйсен вырӑнне хумалла. Унсӑрӑн вӗсене тепӗр ёҫ тунӑ чухне шыраса тупма йывӑр пулать, - терӗ мана анне сурансене шӑнӑр куракӗ хурса ҫыхса янӑ май.

КОНТРОЛЬНЫЙ ДИКТАНТ ПО ТЕМЕ «ДЕЕПРИЧАСТИЕ»

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: диктант.

ЦЕЛИ: проконтролировать знания учащихся о деепричастиях как части речи; закрепить орфографические и пунктуационные навыки.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «Яла сӑнсӑрлатаҫҫӗ» под диктовку.

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Яла сӑнсӑрлатаҫҫӗ.

Эпӗ ҫуралса ӳсне ял - ҫырма хӗрринче. 20-30 ҫул каялла унта ҫӑл тапатчӗ. Ҫынсем унпа усӑ куратчӗҫ. Шӑрӑхра ӑна ёҫсе ӑша кантаратчӗҫ.

Нумаях пулмасть ял таврашне, ҫырма- ҫатрана пӑхса ҫӳрерӗм. Куҫ умне тирпейсӗрлӗх тухса тӑчӗ - кӑмӑл хуҫӑлчӗ. Ҫырмана ӑпӑр-тапӑр тултарнӑ. Аслӑ ҫул ҫумӗнче те, авточарӑнура та, ял пуҫӗнче те - ҫӳп- ҫап. Нумай ҫул тӑкнӑран пу- хӑнса кайнӑ. Малашне те вараласан ял каяш айне пуласси КУҫ кӗрет. Тӑван тавралӑх илемне мӗншӗн упрамастпӑр? Хӑрӑк турата ҫунтарса ямалла. Йӑлари хытӑ каяша район полигонне ӑсатмалла. Халиччен пухӑннӑ ӑпӑр-тапӑра тивӗҫлӗ органсем сисиччен ҫӗр айне чавса чикмелле, ҫиелтен тӑпра хупласа курӑк ҫитӗнтермелле. Йывӑҫ лартмалла. Улӗм тӑван ял хӑйӗн илемӗпе савӑнтартӑр.

Хушма ӗҫ.   Текстра тӗл пулакан деепричастисене аялтан туртса палӑртӑр. *-сассӑн (сессӗн), -иччен, -массерен (-мессерен)* аффикссемлӗ деепричастисемпе ҫут ҫанталӑк темипе предложенисем йӗркелӗр.

Р.Р. ПЕРЕВОД ТЕКСТА С РУССКОГО НА ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: творческая работа

ЦЕЛИ: совершенствовать умения перевода текстов с русского на чувашский язык, умение выделять главное, продолжить работу по развитию орфографической зоркости, развивать речь учащихся, обогащать их словарный запас.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: перевод текста

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 часа

1 вариант

1 задание - переведите словосочетания с русского на чувашский язык; с двумя словосочетаниями составьте предложения.

Подняться наверх, на верх холма; проникнуть вглубь, в глубь леса; идти по двое, взяли по двое носков; идти наудачу, надеяться на удачу; двигаться навстречу, пойти на встречу друзей; отложить на утро, наутро похолодало; выполнить вначале, в начале недели.

2 задание – переведите предложения с русского на чувашский язык.

Ветер, дувший с моря, все время усиливался.

Листва, сорванная с деревьев, закружилась в вихре и стала подниматься кверху.

Мамина родня жила в деревне.

2 вариант

1 задание - переведите словосочетания с русского на чувашский язык; с двумя словосочетаниями составьте предложения.

Поймать на лету, работа в одиночку, трудиться без устали, бежать без оглядки, вскочить на ходу, прыгнуть с разбегу, показаться на миг, говорить без умолку, идти в обнимку, подаренный мной, замешенное тесто, потушенный костер, занавешенное окно, вспаханное поле.

2 задание – переведите предложения с русского на чувашский язык.

Дорога, вся изрытая глубокими колеями, шла темным хвойным лесом.

Остров, озаренный солнцем, пышно и ярко сиял над холодной и неприветливой водой.

Бабушка держала корову.

КОНТРОЛЬНЫЙ ДИКТАНТ ПО ТЕМЕ «СЛУЖЕБНЫЕ ЧАСТИ РЕЧИ»

Пояснительная записка

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: __________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: диктант.

ЦЕЛИ: проконтролировать знания учащихся о служебных частях речи; закрепить орфографические и пунктуационные навыки.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: написать текст «» под диктовку.

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

Çурхи вăрманта

Пêр-ик сехет пушă вăхăт тупăнчê те, çурхи вăрмана кайса курас шутпа Шупашкартан Ишлее çÿрекен автобус çине лартăм. Вунă минутран Лапсар тêлêнче чарăнтăмăр. Анатăп та юнашар вăрмана васкатăп.

Юманлăх пêр çулçă та кăларман. Хушăран çеç пилешсемпе çêмêртсенчен кăпчанкăпа ăвăс тёммисенчеи ешёл сăн çапать. Пăхатăн та çут çанталăк илемне çак ырă вăхăта тăсма май килменшêн шеллесе шутлатăн.Ак çак çêмêрт çулçине те сарса çитереймен - ха, анчах тепёр эрнерен çеçкисем те çурăлêç.

Шёшкё кăчкисем типнё ёнтё. Хурама та шёшкёрен юласшăн мар. Анчах халь вăрманта чи паллă йывăç-вёрене. Çулçисем çук, анчах сарă симêс чечексем инçетренех курăнаççё. Çапах та эпир тепёр чухне вёрене чечек çурса тăкнине сисмесêрех юлатпăр.

ИТОГОВАЯ КОНТРОЛЬНАЯ РАБОТА ЗА КУРС 7 КЛАССА ПО РОДНОМУ ЯЗЫКУ

ТЕСТ.

ДАТА ПРОВЕДЕНИЯ: ____________

ФОРМА ПРОВЕДЕНИЯ: контрольная работа.

ЦЕЛИ: Систематизировать и обобщить знания и умения учащихся, полученные в 7 классе, закрепить изученное путем выполнения тестовых заданий.

СОДЕРЖАНИЕ И ИНСТРУКЦИЯ: выполнить тестовые задания (тесты прилагаются)

1. Контрольно-измерительные материалы предназначены для проведения тестирования по родному языку и литературе в 7 классе. Представлен один вариант тестов, включающий 10 заданий с кратким ответом. Каждое выполненное задание оценивается пятью баллами. Максимальное количество баллов — 50.

2. Таблица пересчета баллов - при проведении тестовых работ по родной литературе критерии оценок следующие:

«5» - 90-100%

«4» - 78-89%

«3» - 55-77%

«2» - менее 54%

ВРЕМЯ ВЫПОЛНЕНИЯ: 1 час

1. Ваттисен сâмахёсене вырâсларан чâвашла куçарâр:

а) Не суди, не судим будешь;

б) Дорог не подарок, дорого внимание;
в) Дороже здоровья ничего нет;

г) Правда глаза колет;

д) Не плюй в колодец – самому пригодиться.

2. Панâ сâмахсене виçё ушкâна уйâрâр: *юрла, çыр, çанталâк, ташâ, кâвак, сулхâн, кёнеке,хурâн, пêçер, кâмâлла, чипер, тунсâхла*.

1. Япала ячё *2.Паллâ ячё* 3. *Глагол*

3. Панâ сâмахсенчен предложенисем тâвâр:

а) Ларать, вâрман, тунсâхлâ, кёрхи:

б) Çулçисем, вёренепе, тёспе, âвâс, витённё, хâмâр, хёрлё.
в) Курâк, хурâнâн, ÿкеççё, вёçсе, çине, çулçисем;

г) Нумайлâха, пёлёт, пытанчё, хёвел, хыçне;

4.Кирлё çёрте точкâсем вырâнне ь палли лартса çырâр.

Çул ... çâ, кун ... ча, имен ... чêк, медал…шён, писател ... сен, роял ... пе, сётел ... ти, выл ... âх, пыл ... чâк, кёмёл…

5. Хâвâр районта (ялта) çуралса ÿснê çыравçâсенчен камсене пёлетёр? Вёсем çырнâ хайлавсен е кёнекесен ячёсене çырса парâр.